# Асаннесен паха парни

Чăваш тĕрри – ĕмĕр сасси,
Пулни-иртни те пуласси,
Пин-пин çулăн тарăн йĕрри,
Асаннесен паха тупри.

Чăваш тĕрри – чăваш чĕри,
Анне кулли, атте юрри.
Унтах чипер хĕрсен сасси,
Шур акăшсен хитре ташши.

Чăваш тĕрри – чăваш тупри,
Чăваш çыннин илем палли,
Тĕссен вăрттăн çыру чĕлхи.
Ăстан çемçе, ĕçчен алли.

Мĕнле пуян чăваш тĕрри!
Хитре, асамлă çав тери.
Асаннесен паха парни –
Ĕмĕртен юлнă ыр йăли.

*Иванова Валентина Михайловна,*
*Канаш районĕнчи Сухайкасси тĕп шкулĕнче*
*чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен.*